25-мĕш çул тухать, Хакĕ 15 пус.

1942 ДЕКАБРЬ 4 ЭРНЕКУН 282 (6217) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй фронтра**, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пырса, малтанхи еннеллех наступлени туса пынă, тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

* * *

Декабрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 20 танкне тата войскăсемпе тĕрлĕ грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине çунтарса тĕпретнĕ е пересе çĕмĕрнĕ, артиллерин 8 батарейине пусарса лартнă, пĕр бронепоезда сиенленĕ, противникăн пехотипе пĕр рота таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр айне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă пайĕнче пирĕн войскăсем противник çирне персе тăнă тата разведка тунă. Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем тăшманăн 3 дзотне тата 2 блиндажне ишĕлтернĕ, артиллерин 3 батарейине пусарса лартнă. Хулан кăнтăр хĕрринче противникăн пехотипе танкĕсен вак групписем тунă атакăсене сирсе янă. Нимĕçсен пехотине пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем Дон шывĕн сулахай хĕрринче наступленилле çапăçусем туса пынă. Нимĕçсем хирĕç тăнине сирсе ярса, пирĕн подразделенисем противникăн йышлă дзочĕсене, блиндажĕсене, траншейисене, окопĕсене тата хирти ытти сооруженийĕсене тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер вилли выртса юлнă. Н-ски чаçăн танкисчĕсем кункаçа 200 гитлеровеца ытла вĕлернĕ, нимĕçсен темиçе танкне персе çĕмĕрнĕ тата 10 миномет, 50 ещĕк мина, 25 пин патрон тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем противникăн контратакине сирсе янă тата нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне çитти пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсен йышăннă позицисене тĕреклетнĕ, уйрăм участокĕсенче противника активлăн тапăннă. Тăшманăн 500 салтакпе офицерне вĕлернĕ, 8 танк, 6 оруди, 31 пулемет, 18 автомашина тата тĕрлĕ грузсем турттарса пыракан 15 лава тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен йышлă виллисем тата персе çĕмĕрнĕ 6 танкĕ вырта юлнă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем вăйлăн наступленилле çапăçусем туса пынă. Великие Луки хулинчен хĕвелтухăçнерехре Н-ски соединенин чаçĕсем, нимĕçсен йышлă контратакисене сирсе ярса, малалла куçнă. Противникăн 2.000 салтакпа офицер ытла вилнĕ. Нимĕçсен 19 танкне персе çĕмĕрнĕ, 12 оруди, 8 танк, 29 пулемет, темиçе çĕр винтовкăпа автомат, 8 миномет, 10 автомашина, 4 радиостанци, питĕ нумай снаряд тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Ржевран хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем противникăн темиçе опорнăй пунктне тытса илнĕ. 500 гитлеровеца çитти вĕлернĕ, 29 дзота ишĕлтернĕ тата боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă. Пирĕн боецсем нимĕçсен 2 танкне тытса илнĕ.

* * *

Калинин облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ 6 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата противникăн çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Крушение пула пĕр паровоз, 12 вагон тата 2 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Калинин облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ 2 поезда крушени тунă. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем нумай пĕтнĕ.

* * *

Пирĕн чаçсем нимĕçсене Сталинград облаçĕнчи Перелазовски районĕнчи Старый Промин хуторĕнчен хăваласа кăларса, фашистсен тыткăнĕнчен красноармеецсен ушкăнне ирĕке кăларнă. Выранти çынсем тата Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем акт çырнă. Вăл актра çапла калани: «Пирĕн войскăсем лагере тытса илнĕ чухне унта тыткăнра лекнĕ 76 красноармеец пулнă. Вĕсем сысна витисенче пурăннă. Нимĕçсем çав тыткăнри çынсене талăкра 16—18-шар сехет ĕçлеттернĕ. Кунне пĕр хут хывăх шӳрпи çитернĕ. Тыткăнри çене вилес патне çитиччен хĕненĕ. Лагере хупнисем пурте çĕтĕк-çатăк тумланнă, çарранах çӳреççĕ. Пурте питĕ начарланса кайнă. 14 боец ура çине те тăма пултарайман. Вĕсене сысна витинчен алăпа йăтса тухса госпитале ăсатнă». Акта çаксем алă пуснă: старши политрук Иевлев, батальоннăй комиссар Кузнецов, политрук Любицкий, старши лейтенант Литвинов, Старый Промин хуторĕнче пурăнакан çынсем Валентина Ильина, Наталья Щапитина тата ыттисем те.

* * *

Норвегире тăракан нимĕç войскисем хушшинче вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем палăраççĕ. Хăшпĕр гарнизонсенче салтаксем вăрçă пирки тарăхни çивĕчрех те çивĕчрех формăпа палăрать. Ситенитора нимĕç полкĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта кайма килĕшмен. Ноябрь уйăхĕнче нимĕç çарĕнчен 200 салтакпа офицер ытла тарнă, вĕсем пĕчĕк ушкăнсемпе Швеци территорине куçнă. Нимĕç командованийĕ салтаксем хумханнине çав тери хаяррăн пусарса лартать. Юлашки икĕ эрне хушшинче темиçе çĕр салтака персе вĕлернĕ.

Декабрĕн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлени туса пынă.

* * *

Сталинград хулин çурçĕр пайĕнче пирĕн разведка тăвакан отряд çĕрле противника тапăнса нимĕçсене темиçе дзотран хăваласа кăларнă. Заводсен районĕнче совет артиллерисчĕсем тăшманăн икĕ орудине, 5 пулеметнăй точкине тата боеприпассем тиенĕ 8 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Н-ски часть вăйлăн çапăçнă хыççăн пĕр тĕреклетнĕ высотана йышăнса илнĕ. Тăшманăн 27 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ. Нимĕçсен пехотин батальонне аркатса тăкнă, 4 оруди, 7 пулемет, 2 миномет, 35 автомат тата винтовкăсем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра противникăн виçĕ контратакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 600 вилли таран выртса юлнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă позицисене тĕреклетнĕ, уйрăм участокĕнче наступленилле операцисем тунă. Халăх пурăнакан пĕр пункт патне пымалли вырăнсемшĕн çапăçса, Н-ски чаçăн боецĕсем тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне, 3 танкпе тата хăй тĕллĕн куçса çӳрекен икĕ туппине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет артиллерисчĕсем боеприпассен пысăк складне сирпĕнтерсе янă.

Пирĕн авиаципе зенитнăй артиллери нимĕçсен 7 самолетне, çав шутра противникăн виçĕ моторлă 4 транспортнăй самолетне, персе ӳкернĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Великие Луки хулинчен хĕвелтухăçнерехри районра Михайлов юлташ командир пулса тăракан чаçăн боецĕсем нимĕçсен виçĕ контратакине сирсе янă та, малалла куçса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, противникăн 6 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. 16 оруди, 9 пулемет, 5 автомат, 11 пин снаряд тата 60 пин патрон тытса илнĕ. Ржевран хĕвелтухăçнерехре пирĕн танкистсем икĕ кун хушшинче 800 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Противникран 5 оруди, 3 миномет, 3 радиостанци тата боеприпассен икĕ складне тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Совет артиллерийĕ 9 дзотпа 5 блиндажа ишĕлтернĕ. 2 противотанковăй орудие тата 11 станковăй пулемета пĕтерсе тăкнă. Ленинград патне пымалли вырăнсенче сывлăшри çапăçура нимĕçсен пĕр самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансен отрячĕ хăй кĕрешме пуçланăранпа противникăн 6 поездне ӳпĕнтерсе янă. Оккупантсемпе çапăçса, совет патриочĕсем нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре наступлени тăвакан совет войскисем нимĕçсен концентрацилле лагерьне тытса илнĕ. Унта мирлĕ совет гражданĕсене хупнă пулнă. Фашистла ирĕксĕрлĕхрен хăтăлнă Александр Баксичев, Михаил Митрейчев тата Василий Львов çапла каласа панă: «Эпир лагерьте икĕ уйăх пурăнтăмăр. Нимĕçсем пире мăшкăллатчĕç. Вилнĕ выльăх какайĕ çитеретчĕç, час-часах темиçе кун хушши пĕр татăк çăкăр та памасчĕç. Выçă тата çĕтĕк-çатăк тумланнă çынсене нимĕçсем ĕçлеме хăваласа каятчĕç. Чирлисене тата халран кайнисене персе вĕлеретчĕç. Гитлеровецсем Чернышевски районри халăха çаратнă, унăн продовольствине, ĕнесене, сыснисене, сурăхĕсене тата чăххисене тытса илнĕ. Бандитсем хĕрарăмсемпе хĕрсене мăшкăлланă».

* * *

Франци патриочĕсем нимĕçсен захватчикĕсене хирĕç вăйлăрах та вăйлăрах кĕрешеççĕ. Тулон çывăхĕнче хĕçпăшалланнă французсен ушкăнĕ нимĕçсен автоколонни çине пенĕ. Марсельре паллă мар çынсем нимĕçсен штабĕн çуртне бомба пăрахнă. Шербург çывăхĕнче оккупантсен çар поездне ӳпĕнтерсе янă. Крушение пула нимĕç салтакĕсем нумай вилнĕ.



ХĔРЛĔ ЯЛАВЛĂ БАЛТИ ФЛОЧĔ. Балтикăра кĕрешекен Н-ски, гвардейски чаçăн летчик-истребителĕсем сывлăшри тăшманпа çапăçма яланах хатĕр тăраççĕ. **Укерчĕк çинче:** Истребительсен дежурнăй звени аэродром çинче.

Б. ВАСЮТИНСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Ржев—Вязьма чугунçулĕ районĕнче

ЦЕНТРАЛЬНĂЙ ФРОНТ, декабрĕн 2-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Чугунçулăн эпир йышăннă участокне каялла тытса илес тесе нимĕçсем мĕнпур вăйпа тăрăшаççĕ. Вĕсем хăйсен малтанхи позицийĕсене каялла тытса илесшĕн пулса пĕр чарăнмасăр контратакăсем тунă, совет войскисен начартарах çирĕплетнĕ звенине тупма тăрăшнă. Пирĕннисем гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă, вĕсене пысăк çухатусем тӳстернĕ.

Противник кӳршĕри участокра чылай пысăк çухату тӳснĕ. Унта вăл пĕр ращана оборонăн вăйлă тĕреклетнĕ узелĕ туса хунă пулнă. Унта пĕр-пĕринпе çыхăнтарса дзотсем, блиндажсем, траншейăсем тата противотанковăй чăрмавсем нумай тунă пулнă. Виçĕ кун хушши пынă хаяр çапăçу хыççăн, пирĕн подразделенисем хĕснипе, тăшманăн каялла чакма тивнĕ.

Çĕр çинчи чаçсене юлашки талăксенче пирĕн авиаци активлăн пулăшнă, вăл тăшманăн укреплениййĕсене тата малти лини патне пыракан резервĕсене атакăланă. Летчиксем нимĕçсен бронепоездне çĕмĕрнĕ, 16 танк, 4 оруди, 3 зенитнăй установка, боеприпассемпе грузсем тиенĕ 45 автомашинăна пĕтерсе тăкнă, противникăн темиçе çĕр салтакĕпе офицерне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

Çав участокра тыткăна илнĕ нимĕçсем пурте совет танкĕсемпе артиллерийĕн çапăçури пахалăхĕ пысăкки çинчен каласа кăтартаççĕ.

Пирĕн енне куçнă поляк Иозеф Пжесовский калана тăрăх, нимĕçсен 78-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 215-мĕш полкĕн 7-мĕш ротине малти позицисем патне илсе пынă чухне ăна советсен инçе перекен артиллерийĕ тĕл персе аркатса тăкнă. Çав ротăн юлашкийĕсене вара тепĕр кунне совет танкĕсем пĕтĕмпех аркатса тăкнă.

Нимĕçсен 5-мĕш танковăй дивизине хушса панă 89-мĕш уйрăм сапернăй батальон фронт çывăхĕнчи халăх пурăнакан пĕр пункт тавра нумай вăхăт хушши оборона сооруженийĕсем туса тăнă. Совет войскисем, тăшманăн позицийĕсен малти линине татсассăн, çав саперсене хăйсем тунă укрепленисене хӳтĕлеме стрелоксем вырăнне янă. Советсен йывăр танкĕсем вăл позицисем патне татса кĕрсессĕн, саперсем тарма тытăннă та пысăк çухатусем тӳснĕ.

«Вăйлă» фрицсен сăн-сăпачĕ кулăшла. Курт Эшнер хĕрарăм джемперне тăхăннă, джемпер çинчен кивелнĕ мундир тăхăннă, мундир çинчен кĕрĕк жилет тăхăнса янă Иозеф Пжесовский çуллахи пек тумланнă. «Хĕллехи тумтирсенчен» унăн наушниксем çеç пур. Ун сăмахĕ тăрăх, кашни отделение ватă хурса çĕленĕ пĕрер плащ панă тата улăмран тунă пĕрер мăшăр ботинка панă, плащне вĕсем шинель çинчен тăхăнса çӳреççĕ.

5-мĕш танковăй дивизири 637-мĕш артиллери дивизионĕн вахмистрĕ Вилли Лозерт, Российăра иккĕмĕш хĕл вăрçаканскер, çапла каласа парать: пире пĕрер мăшăр перчатка тата шлем айĕнчен тăхăнмалли, фланельрен çĕленĕскер, пачĕç. Ăшă шинельсене хурала каякансене çеç паратчĕç.

Е. КАПЛАНСКИЙ.

Çулăмлă çырусем

Фронтран пирĕн пата куллен вуншар çыру килсе тăрать. Фронтовиксем çав çырусенче хăйсен тата аслă кĕрешӳри тусĕсен паттăр ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ, çакăнпа пĕрлех вĕсем орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисене фронта татах та вăйлăнрах пулăшса тăма чĕнеççĕ. Куллен ӳссе, çирĕпленсе пырать фронтпа тыл хушшинчи çыхăну. Фронт — тыла, тыл — фронта хавхалантарать. Çапăçу хирĕнчен килнĕ çырусем пысăк мар, анчах вĕсем хĕрӳллĕ çулăмпа çунса тăраççĕ. Акă вĕсем:

1. ÇУЛПУÇ СĂМАХĔ ПИРЕ ÇĔНĔ ХĂВАТ ПАЧĔ

Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарни çинчен тунă доклачĕ пичетленнĕ «Чăваш Коммунине» илсенех, эпир, чăваш боецĕсемпе командирĕсем, çулпуçăн аслă сăмахне тăван чĕлхепе вуласа тухрăмăр. Çуралнă республикăран инçетре чухне тăван чĕлхепе вулама, каласма уйрăмах кăмăллă. Хамăрăн тăвансемпе ларса калаçнă пекех туйăнать.

Сталин юлташ пирĕн умма аслă задачăсем лартрĕ. Эпир çав задачăсене пурнăçлассишĕн хамăрăн пĕтĕм вăйхăвата кĕрешĕве паратпăр. Эпир, темĕнле йывăр килсен те, пĕр шит те каялла чакмастпăр. Хамăрăн тăван çĕршыва ирсĕр нимĕçсенчен тасатсах пыратпăр.

Чăваш ачисем хамăр халăхăн ятне ямаççĕ. Çулпуç сăмахĕпе хавхаланнă старши сержант А. И. Печников пĕр кун хушшинчех 6 нимĕçе вĕлерчĕ. Çав шут унăн ӳссех пырать. Печников юлташ пĕр çапăçура йывăр аманнăччĕ. Врачсем: вăл çар службине юрăхсăр пулать, терĕç. Анчах чăн-чăн патриотăн паттăр чĕри нимĕнле сурана та парăнмарĕ. Вăл хăйĕн ирĕкĕпе татах фронта таврăнчĕ. Унăн пултарулăхĕпе хастарлăхĕ ытти красноармеецсене хавхалантарать.

Çапла пире çулпуç сăмахĕ çĕнĕ хăват пачĕ. Эпир çав хăват пулăшнипе тăшмана сапса аркататпăрах.

Капитан П. И. ФОМИН.

2. ПИРЕН ÇУЛ ХЕВЕЛАНАÇНЕЛЛЕ

Эпир, фронтăн малти линийĕнче çапăçакансем, аслă полководец Сталин юлташ чĕннине çийĕнчех илтрĕмĕр. Эпир, çулпуçăн сăмахне вуласа тухсан, хамăрăн тăван çĕршыва фашистла ирсĕрсенчен пĕтĕмпех тасатассишĕн, унăн аслă та çутă пуласлăхĕшĕн, чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма тупа турăмăр.

Сталин юлташăн доклачĕпе приказне сӳтсе явнă хыççăн çийĕнчех сержант П. Михайлов, наводчик Н. Викторов хăйсен миномечĕпе тăшманăн 3 огневой точкине пĕтерсе тăкрĕç.

Пирĕн çул малалла — Хĕвеланăçнелле. Тăшмана хĕрхенсе тăмăпăр. Хăвалăпăр ăна, çавăра-çавăра илĕпĕр, таптăпăр, çунтарăпăр, аркатăпăр. Тăван çĕре тасатăпăр.

Сержант ЛЮБИМОВ,
Сержант МИХАЙЛОВ,
Кĕçĕн сержант КРЮЧКОВ,
Наводчик ВИКТОРОВ,
Наводчик ФЕДОРОВ,
Красноармеец ИВАНОВ.

3. ПЫСĂК ТАВ, ТУСĂМĂРСЕМ!

Чи малтанах сирĕн редакци коллективне фронтран хĕрӳллĕ салам.

Эсир аслă Октябрь уявĕ ячĕпе янă парнесем пире кĕрешӳре паттăрла ĕçсем тума, нимĕç вăрă-хурахĕсене пĕр хĕрхенмесĕр аркатса тăкма хавхалантараççĕ. Эсир, тыловиксем, пирĕншĕн тăрăшни пире çапăçу хирĕнче ирсĕр тăшмана татах та хăватлăнрах çапма хушать.

Ку çырăва эпĕ ăнсăртран мар çыратăп. Эсир ăшă кăмăлпа ярса панă посылкăна мана пачĕç. Пысăк тав, тусăмăрсем, паха парнешĕн! Эпĕ çĕнĕ хăватпа, çĕнĕ кăмăл-туйăмпа çапăçăва кĕретĕп. Çак хăват тăшмана мĕн кăтартни çинчен уйрăммăн çырса пĕлтерĕп. Çутă та телейлĕ пурнăçшăн, хамăр аннемĕршĕн — аслă Тăван çĕршывăмăршăн!

Хĕрӳллĕ салампа —
Старши лейтенант А. МАЛИНОВ.

Турттарман вутă вăл—вутă мар-ха

Чугунçул транспорчĕ валли çак çулăн иккĕмĕш çуррине вутă хатĕрлемелли плана республикăри вăрман промышленность предприятийĕсемпе леспромхозĕсем декабрĕн иккĕмĕшĕ тĕлне касас енĕпе 90,5 процент, турттарас енĕпе 81,4 процент тултарнă. Вутă хатĕрлемелли план касас енĕпе ăнăçлăн тулса пырать, анчах турттарас енĕпе вара юлса пырать. Çĕнĕ çулччен шутлă кунсем юлчĕç. Леспромхозсемпе вăрман завочĕсен çак вăхăтра турттарас плана кирек мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртмелле. Вĕсен вăрмана халĕ пырса тăракан ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла, возчиксене çирĕп заданисем парса, çав заданисене кашни кун тултарассишĕн кĕрешмелле. Турттарас нормăна ирттерсе тултарассишĕн возчиксем хушшинче социализмлă ăмăртăва сарса ямалла. Вырăнти транспортпа, туртăм вăйĕпе тата механизациленĕ çулсемпе туллин усă курмалла, çитменлĕхсемпе йывăрлăхсене пуçаруллăн сирсе ямалла.

Чугунçул транспорчĕ валли вутă турттарас ĕçе хăвăртлатма вăрман хатĕрлекен предприятисене районсенчи партипе совет организацийĕсен тимлĕн пулăшмалла. Вĕсен халĕ вăрманта ĕçлеме тивĕçлĕ лавсемпе çынсене планпа палăртнă чухлех уйăрса памалла. Вăрман хатĕрлевĕ валли ĕç вăйĕ тăратасси çине хăшпĕр районсем ку таринччен тимсĕррĕн пăхнине пĕтермелле. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Первомайски, Шăмăршă, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Çĕрпӳ тата Тăвай районĕсене ятламалла. Вĕсем вутă хатĕрленĕ çĕрте ĕçлеме тивĕçлĕ çынсемпе лашасенчен чĕрĕкне те уйăрса паман. Первомайски районран, сăмахран, çуран 75 çын, лашапа 50 çын ĕçлес вырăнне, икĕ-виçĕ çын кăна ĕçлеççĕ.

Районсенчи партипе совет организацийĕсен çакна асра тытмалла: вутă хатĕрлес ĕçĕн ăнăçлăхĕ вĕсем ĕç вăйĕ мĕнле тăратнинчен килет. Çакна эпир Йĕпреç, Шупашкар, Улатăр, Вăрнар тата Калинински районсен примерĕнчен куратпăр. Вăл районсенчен вăрманта йышлăраххăн тата улшăнмасăр ĕçленĕ пирки, вĕсем вутă хатĕрлемелли çурçулти задание пур енĕпе те срокчен тултарчĕç, халĕ заданирен ирттерсе хатĕрлеççĕ тата турттараççĕ.

Вутă хатĕрлес ĕçре пирĕн малта пыракан леспромхозсен пысăк опыт пур. Йĕпреç леспромхозĕ, вăрманта ĕçлекенсен социализмлă ăмăртăвне лайăх организацилесе, ултă уйăхри задание ноябрĕн 2-мĕшĕ тĕлне касас енĕпе 114 процента яхăн, турттарас енĕпе 101 процент тултарчĕ. Плана çавăн пекех Вăрнарти тата Атăл лешъенчи леспромхозсем ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Кайра пыракан Кирепе Шăмăршă леспромхозĕсен тата Буинскри вăрман завочĕн Йĕпреçпе Вăрнар леспромхозĕсенчен пример илмелле, вĕсен ĕç опычĕпе усă курмалла. Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пункчĕ турттарас енĕпе питĕ юлса пырать. Задание 64 процент çеç тултарнă. Унти вăрман пункчĕн руководителĕсен турттарас ĕçе çывăх вăхăтрах вăйлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла.

Канашри пир-авăр фабрики хĕле кĕме начар хатĕрленнĕ

Канашри пир-авăр фабрики (директорĕ Рыбаков юлташ) хĕл условисенче пĕр чăрмавсăр ĕçлеме хатĕрленсе çитмен. Котельнăй цеха ĕçе ярсан, фабрикăна кашни кун 20—25 кубометр вутă кирлĕ пулать. Анчах фабрикăн халĕ вутă запасĕ çукпа пĕрех. Фабрика коллективĕ хăйĕн вăйĕпе 2 пин кубометр вутă хатĕрленĕ. ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ панă задани тăрăх, çав вутăран çуррине Тăвай районĕн турттарса памалла. Анчах район ку таринччен 150 кубометр çеç турттарса килнĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз вутă турттарма пĕр лав та яман. «Коммунар» колхозран çав ĕçе И. Демьяновпа 3 çамрăк ачана 14 кунлăх апат-çимĕç парса янă. Вĕсем вутă турттарас вырăнне Каракăра вунă кун пурăннă та колхоза таврăннă. Анчах вĕсем пирки колхоз правленийĕ те, райсовет исполкомĕ те мера йышăнман. Тăвай райсовет исполкомĕпе парти райкомĕн пир-авăр фабрикине вутă турттарса парас ĕçпе интересленмелле.

Хĕле кĕме хатĕрленес тĕлĕшпе фабрика коллективĕ хăй туса çитермен ĕçсем те чылай. Фабрика управленийĕн конторинче, общежитире тата хăшпĕр цехсенче кăмакасем туса пĕтермен. Конторăри служащисем йĕркеллĕ ĕçлес вырăнне тимĕр кăмака хутса лараççĕ. Возчиксемпе конюхсен çуртĕнче пурăнма май çук: пӳлĕмре сивĕ, кăмакинчен тĕтĕм тухать. Çавăн пек çитменлĕхсем фабрикăра татах та пур.

А. ИЛЬИН.

Декабрьти ĕç графикне пурнăçа кĕртессишĕн

ÇĔМĔРЛЕ. Мартынов юлташ директор пулса ертсе пыракан комбинат коллективĕ çĕнĕ йышши изделисене массăллăн туса кăларма вĕренсе çитес тĕлĕшпе ĕçлет. Пĕр йышши изделие ноябрь уйăхĕнче туса кăлармалли задание коллектив ăнăçлăн тултарнă, халĕ тепĕр йышши издели тăрăх задание вĕçлесе пырать.

Комбинатри цехсенчен иртнĕ уйăхра Петровпа Павлов юлташсен цехĕсем лайăхрах ĕçленĕ. Петров цехĕ уйăхри плана ирттерсе тултарнă, Павлов цехĕ питĕ кирлĕ изделие туса кăларма хăвăрт хăнăхса пырать.

Комбинат хăйне ертсе пыракан халăх комиссариачĕ ярса панă декабрь уйăхĕнчи ĕç графикне илнĕ. Çак график тăрăх комбинатăн декабрьте татах та вăйлăрах ĕçлемелле пулать. Çĕршыв уйăхĕнчи тивĕçе туйса, комбинат коллективĕ çак графика пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме обязательство илнĕ.

Фронта стахановла ĕçпе пулăшаççĕ

КАЛИНИНО, декабрĕн 2-мĕшĕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Сталин юлташ хăйĕн ноябрĕн 7-мĕшĕнче тунă доклачĕнче ĕççыннисене фронта тата лайăхрах ĕçленипе пулăшса тăма чĕнни çине ответлесе, Юнтапа ялсоветĕнчи колхозниксем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татрĕç. Паянхи кун тĕлне ялсоветри пур колхозсем те ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесе памалли 1942 çулхи плана ăнăçлăн тултарчĕç. Государствăна тырă, техникăллă культурăсем, аш-какай, сĕт-çу, çăм срокчен парса татрĕç. Колхозниксем те хăйсен обязательствисене срокчен тултарнă.

«Смычка» колхоз оборона фондне 63 центнер тырă хучĕ, обязательнăй йĕркепе государствăна 182 центнер тырă, 19 центнер аш-какай, 32 килограмм çăм пачĕ. «Алмаз» колхоз кăçалхи обязательствăсене парса татнă хыççăн государствăна 1943 çулшăн 14 центнер аш-какай леççе пачĕ.

Фронтра—вутпа, тылра—ĕçпе

Совет войскисем тăшмана харсăррăн тапăнса пыни тылри работниксен шухăш-кăмăлне çĕклентерет, фронтшăн, çĕнтерӳшĕн ырми-канми ĕçлеме çĕнĕ вăй-хăват кӳрет. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Сталинград патĕнче, Центральнăй фронтра тунă кашни çĕнтерӳ çине рабочисем хăйсен ĕç тухăçлăхне ӳстернипе, нормăна кунран кун ирттерсе тултарнипе ответлеççĕ. Канашри вагонсем юсакан заводри токарь Черный юлташ, фронтри çитĕнӳсем çине ответлесе, ноябрьти нормăна 300 процент тултарма сăмах панă. Черный юлташ хăйĕн сăмахне ытлашшипех пурнăçа кĕртнĕ: иртнĕ уйăхри нормăна 376 процент тултарнă. Çамрăк патриот ку уйăхра та хăвăртлăхсене чакармасăр ĕçлет. Декабрĕн малтанхи икĕ кунĕнче виçшер норма ытла тултарнă.

Кашни рабочи, бригада ăмăртса ĕçленине пула хăшпĕр цехсен коллективĕсем хăйсен ĕç тухăçлăхне нормăпа пăхнинчен икĕ хут ӳстернĕ. Вагонсем тăвакан тата тимĕр шăратакан цехсен коллективĕсем ноябрь уйăхĕнчи нормăна икĕ хут ытла ирттерсе тултарнă.

Фронтри боецсем тăшмана вутпа çунтараççĕ пулсан, тылри рабочисем ĕçпе çапаççĕ.

СССР Совнаркомĕнче

Ĕççыннисен сĕнĕвĕсене шута илсе, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ СССР Конституци кунĕнче (декабрĕн 5-мĕшĕнче) праздник тумалла мар тесе йышăннă, 1942 çулти декабрĕн 6-мĕшне — ĕçкунĕ тесе шутлама йышăннă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти ретне ÿстерессишĕн куллен ĕçлемелле

ЙĔПРЕÇ. Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче районри пуçламĕш парторганизацисем хăйсен ретне малта пыракан рабочисемпе служащисене тата колхозниксене 35 çынна илнĕ. Çĕнĕрен икĕ пуçламĕш парторганизаци туса йĕркеленĕ, пĕри—Буденный ячĕпе тăракан колхозра, тепри—«Большевик» колхозра.

Парти ретне илнĕ çамрăк коммунистсем производствăра хастарлăн ĕçлесе пример кăтартаççĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизацире малта пыракан Мария Тетерисова юлташа парти ретне илнĕ. Вăл фронт таврашĕнчи районран куçса килнĕ. Колхоз производствинче вăл хастарлăн ĕçлет. Уборка вăхăтĕнче ĕç нормине 120—130 процент тултарса пынă. Кашнă хушăра колхозниксене хаçат-журналсем вуласа панă, калаçусем ирттернĕ. Çапла вара вăл колхозниксемпе колхозницăсене çĕнĕ ситĕнÿсем тума хавхалантарса пынă. М. Тетерисова юлташ агитациллĕ ĕçе вăйлатсах пырать. Халĕ вăл колхозниксене Сталин юлташăн доклачĕпе приказне, Хĕрлĕ Çар наступлени туни çинчен пĕлтернисене вуласа парса ăнлантарать.

Буинскри сланец рудникĕнчи пуçламĕш парторганизацире парти ретне илнĕ рабочисем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. К. Коваленко юлташ парти ретне кĕриччен рядовой рабочи пулнă, халĕ вăл рудник çумĕнчи ФЗО шкулĕн сменнăй мастерĕ. Вăл кĕске вăхăт хушшинче темиçе вуншар çамрăка рудникре ĕçлеме вĕрентсе хатĕрленĕ. Коваленко мастерăн смени ĕç нормине яланах ирттерсе тултарать. Ф. Машков юлташ та парти ретне кĕриччен рядовой рабочи пулнă. Парти ретне илнĕренпе вăл сменнăй мастер пулса ĕçлет, хăйне шанса панă ответлă ĕçе чыслăн пурнăçа кĕртсе пырать. Фронта çĕрпыва ытларах продукци парас туйăмпа ĕçлет вăл.

Парти ретне ÿстерес тĕлĕшпе уйрăм парторганизацисем аван ĕçлеççĕ. Райсовет исполкомĕнчи пуçламĕш парторганизацире (секретарĕ Ямбашев) кăçал çĕнĕрен 5 çын хутшăннă.

Юлашки вăхăтра парти райкомĕ парти ретне ÿстерес тĕлĕшпе ытларах ĕçлеме пуçларĕ. Райкомăн инструкторĕсем, отдел заведующийĕсем тата секретарĕсем вырăнсене кайсан, малта пыракан рабочисемпе, колхозниксемпе, служащисемпе парти ретне ÿстерес ыйтупа калаçусем ирттереççĕ. Çавăн пек, райкомăн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ. Ф. Захаров юлташ «Коминтерн» колхозра малта пыракан колхозниксемпе калаçу ирттернĕ, вĕсене парти уставĕпе тата программипе паллаштарнă. Çавăн хыççăн ялсовет председателĕ Никифоров, колхозри иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ Тимофеева тата ытти юлташсем те хăйсене парти ретне илме ыйтса заявлени панă. Кунта заявлени панă юлташсене парти ретне илсен, пуçламĕш парторганизаци тума палăртнă.

Парти ретне ÿстерес тĕлĕшпе начар ĕçлекен пуçламĕш парторганизацисем те пур-ха. Машинно-тракторнăй станцинчи (секретарĕ Зубровская), Хумпуç Патăръелĕнчи (секретарĕ А. Синдячкин) пуçламĕш парторганизацисем кăçал 10 уйăх хушшинче парти ретне пĕрер çынна кăна илнĕ. Вĕсен хăйсен речĕсене ÿстерме пур майсем те пулнă. МТС-ра стахановла ĕçлекен трактористсемпе комбайнерсем вуншарăн шутланаççĕ. Çавăн пекех Хумпуç Патăрьелĕнчи «Правда» колхозра та ĕçре палăрнă колхозниксемпе колхозницăсем сахал мар. Анчах та асăннă парторганизацисем партиллĕ-политикăллă ĕçе çителĕксĕр туса пынине пула, ĕçсыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхĕпе парти ретне ÿстерме çĕрте усă курма пĕлменнине пула, вĕсен йышĕсем ÿсмеççĕ.

Хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем вăрçă вăхăтĕнче партиллĕ ĕçе вăйлатас вырăнне, ăна япăхтарса янă. Çакна ăва «Кооплеспром» артельри (секретарĕ Громов), Буинск вăрман завочĕнчи (секретарĕ Плавин), лесхозри (секретарĕ Дубинин), Калинин ячĕпе тăракан колхозри (секретарĕ Захарова), Туçари (секретарĕ Архипов) пуçламĕш парторганизацисем кăçал парти ретне пĕр çынна та илменни лайăх çирĕплетсе парать.

Парти членĕн кандидачĕсемпе ĕçлессине тивĕçлипе йĕркелемен. Чылай пуçламĕш парторганизацисенче çĕнĕ çынна парти членĕн кандидатне илеççĕ те, кайран вара ун çинчен манса каяççĕ. «Молния» колхозри пуçламĕш парторганизацире А. Иванова колхозницăна—1938 çулта, К. Чубенко колхозницăна—1939 çулта парти членĕн кандидатне илнĕ. Анчах вĕсене члена илес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Вĕсем парти членне куçма мĕнле хатĕрленсе çитнине те никам та тĕрĕслемен. Туçари пуçламĕш парторганизацире те стаж тухнă кандидатсем 3 çын пур. Пуçламĕш парторганизаци кăçал парти ретне ÿстересси çинчен пĕрре те сÿтсе-явман.

Парти ретне çĕнĕ çынсем илес ĕçри ситменлĕхсем ВКП(б) райкомĕн оргинструкторски отделĕнчен те нумай килеççĕ. Оргинструкторски отдел парти членĕн кандидачĕсемпе, çамрăк коммунистсемпе ĕçлессине манăçа хăварнă. Вĕсене кăçал пĕр хутчен пухса канашлу ирттернипех лăпланса ларнă. Çавна пулах ĕнтĕ паянхи куна районри парторганизацире стаж тухнă кандидатсем 68 çын шутланаççĕ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Комсомолăн пуçламĕш организацийĕн ĕçĕсем

Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз çумĕнчи комсомолăн пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Н. Кошкин) вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлесе пырать. Унти кашни комсомолец колхозниксемпе колхозницăсене пример кăтартать. Уборка вăхăтĕнче бригадăсенче агитмассăллă ĕçе лайăх туса пынă. Вĕсем кулленех колхозниксене хаçат-журналсене, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, уйрăм эпизодсене вуласа панă, партипе правительство кăларнă постановленисене ăнлантарнă, общественнăллă ĕçсене активлăн хутшăннă. Вырлăхсене контрактацилес, Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухас, танксен колоннисемпе самолетсен звенисене тума укçа-тенкĕ пухас ĕçре активлăн хутшăнса ĕçленĕ. Комсомол организацийĕ тăрăшнипе СВБ, МОПР ячейки организациленĕ. Вĕсен руководителĕсем пурте — комсомолецсем. Вăрçă кунĕсенче 8 çамрăка ВЛКСМ ретне илнĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ халĕ Хĕрлĕ Çара кайрĕç.

Комсомолец П. Языков ертсе пыракан бригада колхоз производствинче малта пырать. Унăн бригадинче нормăна тултарман колхозниксем пачах та çук. Вăл колхозниксен ĕçкунĕсене вăхăтра шута илет. Çавна пула колхозниксем пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ.

Комсомолка А. Чумакова фермăра ĕçлет. Вăл сысна сен йышне ÿстерессишĕн, вĕсене лайăх пăхса çитĕнтерессишĕн тăрăшать. Çавăн пекех туллимар вăтам шкул çумĕнчи комсомолăн пуçламĕш организацийĕ те (секретарĕ Ф. Александрова) лайăх ĕçлет. Организаци пуçарнипе вĕренекенсем 20 гектар çинче пучах пуçтарнă.

И. ФЕДИНГИН.

КАЛИНИНСКИ РАЙОН.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем

КÿКЕÇ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухас ĕç районра ăнăçлă пырать. Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче наступлени тума тытăннăранпа ĕçсыннисем ăшă япаласем пухас ĕçе татах та хастарлăнрах хутшăнма пуçларĕç. Паянхи куна районĕпе 1.698 тир, 375 килограмм çăм, 152 метр пир, 51 кĕрĕк пиншак, 72 мăшăр çăматă, 186 мулаххай, 216 мăшăр алшиш, 66 мăшăр çăм чăлха, 37 мăшăр çăм носки, 61 мăшăр тăла, 12 свитер, 105 ăшă кĕпе, 101 кальсон, 42 алшăлли т. ыт. япаласем те пухса панă. Пухнă япаласенчен нумайăшне Хĕрлĕ Çара ярса панă та ĕнтĕ. Пухнă çăмран 250 килограмне районри промкомбината çăматă йăвалама панă.

Районри нумай организацисемпе колхозсенче ăшă япаласем пухас ĕçе, государствăн пысăк ĕçĕ вырăнне хурса, тивĕçлипе организациленĕ. Сăмахран, Заводской ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 110 тир, 23 килограмм çăм, 35 кĕпе, 36 мăшăр чăлха, 5 мăшăр алшиш, 35 алшăлли пухса панă. Шĕнерпуçĕнчи «Молния» колхоз 6 мăшăр çăматă, 25 тир, 8 мăшăр носки, 10,4 килограмм çăм; Питукассинчи «Память Ленина» колхоз членĕсем 35 тир, 3 мăшăр çăматă, 3 мулаххай, 2 мăшăр перчатка, 2 мăшăр носки, 7,8 килограмм çăм, 16 метр пир; Толиково ялсоветĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 2 кĕрĕк пиншак, 4 мăшăр çăматă, 31 тир, 10 мăшăр алшиш, 2 мăшăр носки, 3,6 килограмм çăм, 6,4 метр пир пухса панă. Ăшă япаласем пухас ĕçе çавăн пекех Шĕнерпуç ялсоветĕнчи «Кормилец», Солянково ялсоветĕнчи «2-мĕш пятилетка», Кочаково ялсоветĕнчи «Строитель», Чăкăр ялсоветĕнчи «Новая деревня» колхозсем те активлăн хутшăнаççĕ.

Хĕрлĕ Çар валли ăшă япаласем парас ĕçре партипе совет активĕ, колхоз руководителĕсем пример кăтартаççĕ. Шĕнерпуçĕнчи «Молния» колхоз председателĕ коммунист Т. Иванов юлташ пĕр мăшăр çăматă, пĕр мăшăр носки, Шĕнерпуç ялсовечĕн секретарĕ коммунист Н. Иванов юлташ пĕр мăшăр çăматă, пĕр мăшăр носки, Кивçурткассинчи «XI лет Октября» колхоз председателĕн заместителĕ Самарин юлташ пĕр мăшăр çăматă, пĕр мăшăр тăла панă.

Юраково ялсоветĕнчи «Тузи» колхоз председателĕ, вăлах территориальнăй парторганизацин секретарĕ, 60 çулхи Забродин юлташ 2 тир, пĕр мăшăр çăматă, пĕр мăшăр алшиш, 200 грамм çăм панă.

Т. ЛОГИНОВ.

Ÿкерчĕк çинче: Чкаловски районри «Правда» колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕ Ризатдин Шигабутдинович Сгартдинов юлташ. Вăл ертсе пыракан фермăсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур йышши выльăхсем тĕлĕшпе те ирттерсе тултарнă.

СРОКЧЕН ТУЛТАРЧĔÇ

ЕЛЧĔК, декабрĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсамалли IV-мĕш кварталри плана срокчен пурнăçларĕ. Декабрĕн 3-мĕшĕ тĕлне пурĕ 23 трактора юсанă; вăл шутра 7 трактора капитальнăй, 16 трактора текущи ремонт тунă. Кунсăр пуçне, ремонт тăвакан бригадăсем 16 плуг, 6 культиватор, 7 сеялка юсаса лартрĕç. Ремонт пахалăхĕ иртнĕ çулхинчен чылай лайăх. Трактористсен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк. Спиридонов, Ахтукин, Струнков, Маркелов, И. Арбузов, И. П. Арбузов трактористсем тата вĕсем ĕçлекен бригадăсем хăйсен тракторĕсемпе ялхуçалăх машинисене пурне те юсанă, вĕсем машинăсене юсас ĕçе отлично тунă.

МТС тракторсен нумай пайĕсене хăйĕн мастерскойĕнчех тăвать. Гильзăсене туса якатас ĕçе йĕркеленĕ, регулятор, вентилятор, коромысло валикĕсене рабочисем хăйсемех тăваççĕ.

МТС коллективĕ Сталин юлташăн ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă историллĕ доклачĕ çине ĕçпе ответлесе, ремонт ĕçне январĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлессишĕн кĕрешет.

В. ПАВЛОВ.

Пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсене çителĕклĕ хатĕрлесе хурар

Пахча-çимĕçсем çынна питĕ кирлĕ. Купăста, хăяр, кишĕр, сухан пирĕн апатра тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. Апла пулсан пирĕн 1943 çулта пахча-çимĕçсене тата нумайрах лартса тумалла.

Кăçал Ишлей районĕнчи хăшпĕр колхозсем купăста лартса ÿстересси çине çавăрăнса та пăхмарĕç, çапла вĕсен халĕ купăстана тырăпа улăштарса, иксĕвиçĕ хут хаклăрах парса илмелле пулчĕ. Ĕç çине çавăн пек пăхни халь, вăрçă вăхăтĕнче, пачах килĕшмест, вăл колхоз пурлăхне юхăнтарни пулать.

Пахча-çимĕçсене 1943 çулта тата нумайрах лартса тăвас тесен, вĕсен вăрлăхĕсене халех хатĕрлесе хумалла. Кăçал та, иртнĕ çулсенче те пирĕн республикăри нумай колхозсем пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсене «Сортсемовощь» конторинчен илнĕ. Кăçал çуркунне Наркомземăн «Сортсемовощь» Управленийĕнче нумай колхозсем вăрлăхсем туянчĕç. Анчах килес çул апла пулмасть. «Сортсемовощь» Управленийĕ кăçал туса илнĕ тата пухнă пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсене чи малтан нимĕç оккупанчĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене ярса парать. Çавăнпа пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсене кăçал колхозсен хăйсен ытларах хатĕрлемелле пулать.

Нумай колхозсем тата хăшпĕр районсем пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсене çителĕклĕ таран хатĕрлесе хунă тата вăрлăхлăх çимĕçсем нумай уйăрса хунă. Тĕслĕхрен, Тăвай районĕ кишĕр вăрлăхне 142 процент, хĕрлĕ кăшман вăрлăхне 178 процент, хăяр вăрлăхне 134 процент хатĕрлесе хунă. Çавăн пекех Улатăр, Шăхасан районĕсенчи колхозсем те пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсене акма кирлинчен чылай нумайрах хатĕрленĕ. Улатăр районĕ, тĕслĕхрен, купăста вăрлăхĕ тума планпа пăхнинчен 444 процент ытларах туна уйăрса хунă, çавăн пекех кишĕре 191 процент, хĕрлĕ кăшмана 250 процент вăрлăхлăх уйăрса хунă.

Анчах та пахча-çимĕçсен вăрлăхне хатĕрлес ĕçе пур çĕрте те кирлĕ пек туса пыни çук-ха. Йĕпреç, Кувакино, Первомайски районсенче çак ĕç çине пачах та çавăрăнса пăхман. Ку районсенчи çĕрĕç пайĕсем пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсем колхозсенче пуррипе çуккине те пĕлмеççĕ.

Пăрачкав райçĕрĕç пайĕ ку тĕлĕшпе пачах та ĕçлесшĕн мар. Вĕсем пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсене илме Наркомземăн «Сортсемовощь» Управленине заявка çырса панă та çакăнпа лăпланса ларнă. Паллах, капла ĕç тухмасть.

Пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсене хатĕрлес ĕçе вăхăтра кирлĕ пек туса пымалла. Колхозсен вăрлăхсене хăйсем валли хăйсемех хатĕрлемелле. Вăрлăхсем пур, вĕсене кăçал колхозниксемпе колхозницăсем нумай туса илнĕ. Аякран пырса парассине кĕтсе лармасăр, çав вăрлăхсене пухас пулать, кашни районăн килес çул акма пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсене çителĕклĕ таран хатĕрлесе хумалла. Райçĕрĕç пайĕсен агрономĕсен çак ĕçе пысăк ответлăхпа туса ирттермелле, килес çул пахча-çимĕçсене тата нумайрах акса тума вăрлăхсене халех çителĕклĕ таран хатĕрлесе хумалла.

Р. ОСАНОВ.

«Сортсемовощь» Управленийĕн главнăй агрономĕ.

Пирĕн землякесем

Халăхсен кĕрешÿри пĕрлĕхĕ

Сапернăй рота командирĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ старши лейтенант Крючков юлташ красноармеецсемпе кĕçĕн командирсене пĕр çĕре, блиндажа пухтарчĕ. Нарядра маррисем пурте вăхăтра килсе çитрĕç.

Старши лейтенант Крючков Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн 345-мĕш номерлĕ приказне вуласа пĕтерсен красноармеецсемпе командирсем, пĕрин хыççăн тепри тухса, хăйсен кăмăлĕсене уçса сăмах каларĕç. Вырăс çынни сержант В. Соломин хыççăн унăн отделенийĕнчи чăвашсем: «За боевые заслуги» медаль илнĕ красноармеец Г. Елизаров тата «За отвагу» медаль илнĕ ефрейтор Т. Алехин юлташсем тухса каларĕç.

— Нимĕçсене пĕр шеллемесĕр вĕлермелле. Эсĕ нимĕçе вĕлерместĕн пулсан, вăл сана е санăн тăванусемпе юлташусене вĕлерет. Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан вăрçăра эпĕ малашне те хаяррăн, вăя шеллемесĕр тата, кирлех пулсан, пурнăçа шеллемесĕр кĕрешĕп,— терĕ Алехин.

Ефрейтор нумай каласа тăмарĕ. Вăл Сталин юлташăн приказне пурнăçа кĕртессишĕн паттăррăн кĕрешессе лайăх ăнланса илчĕ.

— Вĕсемпе эпĕ хуть те мĕнле приказа та лайăхах пурнăçа кĕртессе шанатăп,— терĕ отделени командирĕ Соломин.

Совет Союзĕнчи тĕрлĕ халăхсен представителĕсем, алла-аллăн тытăнса, тăшмана хирĕç çапăçаççĕ. Вĕсен пĕр ĕмĕт— нимĕç фашисчĕсене хăвăртрах çапса çĕмĕрсе, çĕршыва ирсĕр çĕлен-калтасенчен тасатмалла. Вăрçă пирĕн халăхсен туслăхне çирĕплетрĕ. Миномет расчечĕн командирĕ Раевский минăсен подносчикĕ туркмен Шаджыков хуть те мĕнле йывăр условире те приказа лайăх пурнăçласса шанать. Узбек, кĕçĕн лейтенант Ахмед Сафаев хăйĕн ротинчи вырăс пулеметчикĕсен хушамачĕсене часах аса илет.

Пирĕн подразделенисенчен пĕринче Джамбулăн тăванĕ — красноармеец Масимхан Балганбаев пур. Кунта вăл хăйĕн хĕвеллĕ Казахстанне сыхлать. Тăван çĕршыва вăл хăйĕн аслашшĕ Джамбул юратнă пекех юратать, унăн тăшманĕсене пĕтĕм чун-чĕререн кураймасть.

— Юлашки кунсенче кăна виçĕ нимĕçе персе вĕлертĕм. Хамăр çĕре пĕтĕмпех тасатиччен пĕр шеллемесĕр вĕлерсе тĕп вăл йытăсене, — тет Масимхан.

Партийнăй комисси умне туркмен Нурий Ниязмуратов кĕрсе тăчĕ.

— Миçе нимĕçе вĕлертĕр? — ыйтать комисси членĕ армянин-майор Григорьян.

— Ку вăхăта çитиччен икĕ нимĕçе вĕлертĕм, малашне татах та вĕлерме пулатăп пирĕн таса çĕре вараланакан ирсĕрсене.

Нимĕçе вĕлермелле — çакă хуть те мĕнле халăх чĕлхипе каласан та пĕр пекех илтĕнет. Тăван çĕршыври хуть те мĕнле халăх та нимĕçсене ытларах вĕлерме тăрăшать, мĕншĕн тесен нимĕçе вĕлерни эпир çĕнтерессине çывхартать.

Фронт тăван çĕршыври халăхсен туслăхне им иксĕлми çирĕплетрĕ. Пĕр тăван çемьери халăхсем тăшмана çĕнтереççех.

Т. МАЙОРОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Фронтри çĕнтерÿсемпе хавхаланса

СЕНТЕРВАРРИ. Сталинград патĕнче Хĕрлĕ Çар чаçĕсем ăнăçлăн наступлени туса пыни çинчен Шуршăлти туллимар вăтам шкулăн директорĕ И. Романов юлташ «Çĕнĕ ял» колхозри колхозниксем хушшинче доклад туса пачĕ. Колхозниксем Сталинградшăн пыракан çапăçури ситĕнÿсемпе хавхаланса фронта татах та ытларах пулăшма пулчĕç. Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума çĕнĕрен 2.000 тенкĕ ытла укçа пухрĕç.

И. ОСИПОВ.

СССР Совнаркомĕнче

Судостроени промышленность Наркомачĕн Центральнăй конструкторски бюровĕн вилнĕ конструкторĕн В. В. Перловскин çемьине пулăшасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Виктор Викторович Перловскин çемьине—унăн арăмне Анна Александровна Перловскаяна пĕр вăхăтлăха 10 пин тенкĕ укçа парса пулăшас.

2. В. В. Перловскин çемьине персональнăй пенси памалла тăвас: арăмне Анна Александровна Перловскаяна — ĕмĕрлĕхех кашни уйăхра 400-шер тенкĕ; ывăлне Виктор Перловскине—вăл ÿсс çитиччен кашни уйăхрах 250-шар тенкĕ памалла тăвас.

Ют çĕршывсенче

Хĕрлĕ Çар наступлени туса пыни çинчен ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

Англия

«СТАЛИНГРАДА ХÿТЕЛЕНИ —НИХĂÇАН АСРАН КАЙМИ ПРИМЕР»

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Англири чылай хаçатсен обозревателĕсем хăйсен статьисенче совет войскисем Сталинград районĕнче тата Центральнăй фронтра наступлени туни çинчен çыраççĕ. Çак çапăçусем питех те пысăк вырăн йышăнса тăракан событисем пулса тăраççĕ, тесе çырать Гарвин.

«Обсервер» хаçатра Либерейтор обозреватель çапла çырать: «Хĕрлĕ Çар Германи çарне пырса çапни çав вăхăтрах Гитлерăн лару-тăруне те хавшатрĕ. Вырăссем фронта шăтарса кĕрсе кайни вăрçă енĕпе кăна мар, политика тĕлĕшпе те пысăк вырăн йышăнма пултарать, мĕншĕн тесен Германи çарĕсем Сталинград патĕнче поражени тÿсни Гитлер хăй поражени тÿсни пулса тăрать. Вырăссем чакса пынă хыççăн тата хаяррăн хÿтĕленнĕ хыççăн, иртнĕ хĕлти пекех, Германи çарне пĕтĕм вăйпа пырса çапма пултарчĕç, вĕсем хирĕç тăма тата хăйсен речĕсене çĕнĕрен йĕркелесе яма пултарчĕç, çак ĕçе мухтама сăмах та çитерме çук. Хăрушă вăхăтра çакăн пек пырса çапассине вырăссен командирĕсем лăпкăн тата пултаруллăн планласа хатĕрленине те паллă тăвас пулать».

Хĕрлĕ Çар Германи салтакĕсене нумайăн тыткăна илни фашистла войскăсен шухăш-кăмăлĕ начарланнине кăтартса парать, тесе çырать «Вашингтон пост» хаçат. Гитлер часах çĕнтересси çинчен шантарса каланисене Германи салтакĕсем нумай хут илтрĕç ĕнтĕ, анчах халĕ вĕсем çĕнтерÿ нихăçанхинчен те аякрине курса тăраççĕ.

«Кроникл» хаçат (Техас штачĕ) çырнă тăрăх, нимĕçсем Хĕрлĕ Çар вăйлăн пырса çапма пултарнине курса ĕненчĕç. Хĕрлĕ Çарăн çак вăйне Сталинград патĕнчи тата Кавказри оборонăллă çапăçусем вăхăтĕнче тимлĕн сыхласа хăварнă.

Канада

«ПАТТАРЛĂХПА ЧĂТАМЛĂХ»

ОТТАВА, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Совет войскисем Кавказра, Сталинград патĕнче тата Центральнăй фронтра тунă ăнăçусем пирки Канадăра хавасланса çыраççĕ.

«Ситизен» хаçат (Оттава) умстатьяра çапла çырать: Хĕрлĕ Çар вăрçă историнчи чи аслă руководительсене ÿстерсе пачĕ, вĕсен пултарулăхĕ лайăх хÿтĕленме тата хĕл тĕлне контрнаступлени пуçласа яма май пачĕ. Çакă вăл Совет Союзĕн вăй-хăватне ĕненмелле кăтартса паракан тĕслĕх пулса тăрать.

«Дейли стар» хаçат (Виндзор) çапла çырать: вырăссем наступлени тума пуçланă вăхăтран вара, паллах, вăрçă ĕçĕнче çавăрăну пулчĕ. Тĕлĕнмелле паттăрлăхпа чăтăмлăх питĕ пысăк результатсем пачĕç, тесе çырать хаçат. Хаçат шутланă тăрăх, нимĕçсем хăйсен ăнăçсăрлăхĕсене йышăнни хĕвелтухăçĕнчи катастрофăна Германи халăхĕнчен пытарма май çуккине кăтартса парать.

США

«ХĔРЛĔ ÇАР ВĂЙЛĂН ПЫРСА ÇАПМА ПУЛТАРНИНЕ НИМĔÇСЕМ КУРСА ĔНЕНЧĔÇ»

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Совет войскисем наступлени туни çинчен пĕлтернисене Америкăри хаçатсем халĕ те нумай пичетлеççĕ.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин специальнăй корреспонденчĕ, Англин Çурçĕр Африкăри войскисемпе пĕрле куçса пыраканскер, çапла пĕлтерет: союзниксем Тунисăн çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи пайĕнче противникăн позицийĕсене сывлăшран вăйлăн тапăнма пуçларĕç. Андерсон генералăн пĕрремĕш армийĕ çĕр çинче вăйлă наступлени пуçласа яма хатĕрленет. Англипе Америка авиацийĕ Бизертăри, Сфаксри тата Габесри аэродромсемпе доксем çине бомбăсем пăрахать. Пĕрремĕш армин чаçĕсем тĕнĕл держависен войскисене вăйлăн хĕсеççĕ.

Француз войскисем Габес—Сфакс секторĕнче малалла куçса пыраççĕ. Пĕрремĕш çар, тинĕс хĕррипелле куçса пырса, Джебейдăна çавăрса илет. Çавăнпа Бизертăри гарнизонăн часах тинĕс çулĕпе çеç чакмалли юлать.

ДЖИБУТИРИ ФРАНЦУЗ ГАРНИЗОНĔ БРИТАНИ СОМАЛИНЕ КУÇНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Джибутири (Франци Сомалийĕ) француз гарнизонĕн чылай пысăк пайĕ Британи Сомалийĕн чикки урлă каçнă. Англи офицерĕсем вĕсемпе çыхăннă ĕнтĕ.

ЛИВИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ çапла пĕлтерет: ĕнер Англи войскисем Эль—Агейла çывăхĕнче противникăн артиллерине ăнăçлăн атакăланă. Англи самолечĕсем Бизерта çине тата Сицили утравĕ çинчи Трапани çине бомбăсем пăрахнă.

ИТАЛИРЕ ПĂШĂРХАНАÇÇĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Обсервер» хаçат çапла çырать: Германин Бизертăпа Тунисри войскисем хирĕç тăнине сирсе ярсан тата Роммелĕн армине пĕтерсе тăксан,—Италия союзниксем атакăламалли чеччетри объект пулса тăма пултарать. Итали хаçачĕсемпе радиокомментаторсем Итали халăхне вăхăтра хăрушлăх умĕнче тăни çинчен калаççĕ, халăха вĕсем «çĕршыв çапăçăвăн пысăк хирĕ пулса тăма пултарнипе килĕшме» чĕнеççĕ. Тĕнĕл держависем Ливире поражени тÿсни, унта Итали армийĕн чаçĕсене уйрăмах вăйлăн пырса çапни, çавăн пекех тата Англи бомбардировщикĕсем Генуяна, Милана тата Турина вăйлăн пыра-пыра тапăнни Италие хăратса ÿкернĕ. Çакă питех те паллă: Итали халăхĕн, пуринчен ытла Италин çурçĕр пайĕнчи промышленность центрĕсенче пурăнакан халăхăн, шухăш-кăмăлĕсем вăйлăн пусарăннă.

Хаçат тата çакна кăтартса парать: Италин «союзникĕ» пулса тăракан Германин войскисем Итали войскисене Ливире пĕччен пăрахса хăварнă пирки Итали халăхĕ питĕ тарăхать. Германипе Итали салтакĕсем пĕр-пĕринпе хирĕçнине пула темиçе вырăнта, уйрăмăн илсе кăтартсан, Катанире (Сицилия) тата Барире юнлă тытăçусем пулса иртнĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ БЕЛЬГИ ПАТРИОЧĔСЕНЕ ТИСКЕРРĔН ТЫТКАЛАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлеровецсем оккупациленĕ Бельгири патриотизмлă движение тискер терроргпа пусарса лартма хăтланаççĕ. «Брюселер цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нимĕç бургомистрне Шарлеруана вĕлернĕ хыççăн нимĕçсен çар коменданчĕ çакăн пек приказ кăларнă: бургомистра вĕлернĕ çынсене пилĕк кун хушшинче тупмасассăн — заложник шучĕпе тытса хупнă 15 бельгиеца персе вĕлереççĕ.

Льежра Германин çар служащине хĕненĕшĕн 3 бельгиеца персе вĕлернĕ, Германие хирĕç вăрттăн ĕçлекен организацисемпе çыхăнса тăраççĕ тесе 9 бельгиеца çакса вĕлернĕ. Брюкке хулинче «противника пулăшнă» тесе айăпласа, Бельгин 18 гражданне асаплантарса вĕлернĕ. Çав хаçатах тата çапла пĕлтерет: паллă мар çынсем Германи влаçĕсен представителĕсене тапăннăшăн тата саботажла ĕçсем тунăшăн 285 бельгиеца заложник шучĕпе тытса хупнă тата Бельгирен кăларса янă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Требуются: белошвейки, скорняки, умеющие шить на машине, ученики и техничка.

Обращаться: гор. Чебоксары, Заводская, 10, правление артели «Красный кустарь».

Водосвету требуется нормировщик по нормированию слесарно-токарных работ.

Обращаться: г. Чебоксары, Водосвет, отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн 3—99 ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11620 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.